# Неонила ПЕТРОВСКАЯ

## /Кузьмина Неонила Андреевна/

«Хресчен сасси» хаçатра тăтăшах Нелли Петровская çырнă хайлавсем пичетленсе пыраççĕ. Паянхи вулакансенчен хăшĕ-пĕри ун пирки, тен, пĕлсех те каймасть.

Неонила Андреевна Кузьмина /Петровская/ 1932 çулта Тутар Республикине кĕрекен Буинск районĕнчи Альших ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ, ял халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн вăй хунă. Анчах ăна курайманнисем те тупăннă. Пĕр хура каçра ăна вĕлернĕ. Амăшĕ 6 ачапа тăрса юлать: виçĕ хĕр, виçĕ ывăл. Асли - Петр Андреевич - пур пĕрех Хусанти университетра ют çĕршыв чĕлхисен факультетне пĕтерет, нимĕç чĕлхине вĕренсе тухать. Нина аппăшĕ медучилище пĕтерет. Вăрçă пуçлансан аслă пиччĕшĕ çар тăлмачĕ пулса тăрать, анчах пĕр çапăçура тыткăна лекет. Каярахпа, вăрçă чарăнсан, канăç памаççĕ ăна: тĕпчеççĕ, ыйтаççĕ, хĕсĕрлеççĕ. Петр Андреевич пур пĕрех ăста педагог пулса вăтам шкулти ачасене нимĕç чĕлхи вĕрентет. Ăру хыççăн ăру вĕрентсе кăларать вăл тăван тавралăхĕнчи çамрăк чăвашсене.



Павăл пиччĕшĕ - хĕрӳ чĕреллĕ танкист - пĕр çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Танкĕпе пĕрлех çунса каять. Нина аппăшĕ те фронтра пулать. Тӳсĕмлĕ чунпа, вилĕмпе куçран куç тĕл пулса аманнă салтаксене çапăçу хирĕнче пайтах çăлса хăварать. Мĕтри пиччĕшĕ темиçе çул Инçетри Хĕвел тухăçĕнче тинĕс карапĕ çинчи матрус пулса Тинĕс çарĕн сехметĕнче тӳсĕмлĕх кăтартнă.

Çапла пулнă Неонилăн кил-йыш ăрачĕ.

Пĕчĕкренех ашшĕсĕр тăрса юлнă Неонилăн пурнăçĕ пылак пулман. Вăл 8 çула çитсенех кĕтӳç пушшине çĕклет, кĕтӳ пăхать. Вăтам шкул пĕтерсенех Свияжск хулинчи ял хуçалăх техникумĕнче вĕренет. Агрономи енĕпе. Каç-каç сăвăсем çырать. Пысăк калăпăшлă хайлав çине куçать. «Пушар» поэма кĕвĕлет. Каярахпа ăна вăл «Тавăру» ятпа улăштарать. 1957 çулта çак поэмăна /ăна вырăсла тӳрремĕн Виктор Рсай куçарать/ Мускаври М. Горький ячĕллĕ литература институтне ярса парать, вĕренме кĕрет. Ку поэмăра А. Пушкинăн «Дубровский» витĕмĕ те палăрать, анчах вăл чăвашлăхпа, чăваш тĕнчипе çыпăçуллă. Юлашкинчен Неонила Кузьмина-Петровская проза çине куçать. 1958 çулта «Чыс» повесть çырса пĕтерет. М. Горький ячĕллĕ литература институтĕнче унпа пĕрле В. Цыбин, Светлана Соложенкина, Людмила Щипахина, Марина Соколова вĕренеççĕ. Вĕсем унăн пултарулăхне пысăк хак панă. Юлашкинчен Неонила хăй тĕллĕн /заочно/ вĕренме куçать. Шупашкарти чăваш кĕнеке издательствинче корректор пулса ĕçлет. Анчах ĕç укçи сахал. Вăл вара тĕрлĕ заводра гальваник, токарь, маляр ĕçĕсенче вăй хурать. Çав вăхăтрах «Çил-тăманлă каç», «Шурă лили», «Ахрăм» кĕнекесем çырса кăларать. Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм кăмăлласа йышăнать унăн хайлавĕсене. Юлашки çулсенчен Неонила Петровская «Тухатмăш» дилогипе «Хура ангел», «Тăм тивнĕ чун», «Ылхан» ятлă романсемпе нумай-нумай калав çырать. Çулĕсем Мари Эл Республикинчи Звенигово хулинче иртеççĕ. Нумайччен йывăр чире кайса пурăннă хыççăн 2001 çулхи март уйăхĕн 15-мĕшĕнче çав хуларах вилет. Ăна çав хула масарĕнчех пытарнă. Кăçал, март уйăхĕн 15-мĕш кунĕнче, паллă чăваш çыравçи вилнĕренпе виçĕ çул çитрĕ. Анчах унăн çырав сунтăхĕнче халиччен кун курман хайлавсем татах та пур-ха. «Тăм тивнĕ чун» роман, «Тавăру» ятлă драмăлла поэма тата ытти ал çырăвĕсем халиччен те пичетленмен. Анчах анлă шухăша каланă йĕркесем ирĕксĕрех аса килеççĕ.

Тĕнче, тĕнче! Эс анлă, пысăк,
çынпа çын çеç хаяр, кăра.
Эпир сывланă сывлăш пăсăк -
çиет вăл çамрăк кăкăра.

Çыравçă ĕçĕ çак йĕркесен чăнлăхĕпе килĕшӳллĕ. Нелли Петровская хăйĕн романĕсене çак шухăша тĕпе хурса калăпланă.

**Н. ТЕВЕТКЕЛ.**